# АВЕТИК ИСААКЯН

*Армени*

## ХАЛӐХ КӖСЛИ

(XVIII ӗмӗрти легенда)

Кукӑр хӗҫ хӑмсарчӗ Сербие,
Серби ҫӗрӗ шӳрӗ юнпалан.
Ҫӑхансем, виле ҫие-ҫие,
Кранклатаҫҫӗ хирсенче ялан.

Хӗрхенӳсӗр, чунсӑр Абдуллах
Савӑнать кӗрекере паян.
Пуҫ касса туранӑшӑн, паллах,
Кучченеҫ нумай кӳрет султан.

Белградра вӑл, Сербин чунилли,
Хатӗрлет уяв пӗр керменте.
Кучченеҫ кирлех халь ун валли,
Парнесем те кирлӗ, темӗн те...

Ларчӗ вӑл патша пуканӗпе,
Ылтӑн алтӑрпа ӗҫет шерпет.
Серб ҫыннин юнне тутаннӑ пек,
Куркине пӑхса, вӑл хӗпӗртет.

Ун салтакĕсем салху, хаяр —
Хыçалта лараççĕ йĕркипе.
Сĕтелсем тулли какай, юр-вар,
Сим юхать Дунайăн шывĕ пек.

Касса татнă пуçсене суса,
Каппаять кашни хăй ĕçĕпе.
Эсремет пек ахăрса-кулса,
Мухтанать сулмаклă хĕçĕпе.

„Ăçта-ха çав серб чĕрисене
Юрăпа хыптаракан вара?
Илсе килĕр хăвăртрах хăйне,
Ачисем ун пирĕн алăра!“

Çавăтса пыраççĕ Миркона,
Мирко сÿннĕ куçĕсемпелен
Ларчĕ те пуç усрĕ шăп кăна,
Кĕслине салтмарĕ çумĕнчен.

Абдуллах-патша калать ăна:
„Санăн Сербине тĕп турăм эп,
Анчах юрăшăн пур ывăлна
Чĕрренех хăвна парас пуль теп.

Халь пуçла — юрла та сăвăла
Вилĕмсĕр хăватлă сăввуна:
Ĕмĕрех мухтатăр санпала
Çĕр те, шыв та, пĕлĕт те мана“.

Сад пахчи сĕнет патша ватта,
Ылтăнпа ăна сăхлантарать.
Лешĕ, хăй кĕслине çакнă та,
Шăпăрт сас та кăлармасть, ларать.

„Магомет ячĕпеле сана
Эп тупа тăватăп, эй, тăнла!
Хăтарап халех пур ывăлна,
Таврăнатăр кĕç юрла-юрла".

Ватă Мирко сĕмленсе илет:
Ачисем, кил-çурчĕ, ирĕк кун...
Анчах шăп ларать паçăрхиллех,
Сывлани те сисĕнмест пек ун.

Абдуллах выç кашкăр пек пăхать:
Мирко сăнĕ сӳрĕк те сивлек.
Балкан тăвĕ хушшипе шăвать
Аслатиллĕ пĕлĕт çавăн пек.

Ахăрать патша: „Юрла, чура!
Эп мĕскер хушап — çавна юрла.
Унсăр эп пурне те — тур курать —
Пур ачусене те шалчалап!"

Суккăр Мирко курнă пек пулать:
Тăрăнать шалч ачин ӳтне...
Ун ырхан алли чĕтре пуçлать,
Кĕсли сас парас пек çӳçенет.

Анчах кĕмĕл хĕлĕхĕсене
Тытаймасть вăл пӳрнисемпелен.
Ун чĕри асаплăн хĕсĕнет,
Ун алли сикмест выранĕнчен.

Хăтарас тесе ачисене,
Сăвăсем хумашкăн пикенет.
Анчах чунĕ итлемест хăйне,
Сас памасăр пырĕ питрĕнет.

Вăл туять: çĕр шӳнĕ юнпалан,
Кукăр хĕç хăмсарнă Сербие.
Хирсенче çаплах хура çăхан
Кранклатать, виле çие-çие.

Мирко çилĕллĕн сиксе тăрать,
Кĕслине вăл çĕклесе çапать,
Таптаса ватать те кăшкăрать
Çĕнтерӳллĕ, хытă сасăпа:

„Эй, ылханлă, ирсĕр чунилли!
Кас, вĕлер, çунтар, анчах ан ман:
Парăнусăр халăхăн кĕсли
Нихăçан та суймĕ, нихăçан!"